Çĕре юратнăран фермер ĕçне суйларĕ

В.Г. Ямангеев МТЗ-50 трактор çинчен анчĕ те куçĕпе кĕрхи çĕртме тунă уя ытамларĕ. Пĕр 10 гектар пулчĕ пулас, – мĕлтлетсе иртрĕ пуçĕнче шухăш.

Тепĕр ир çумăрлă çанталăк суха тума чăрмантарчĕ. Кăçал çур акине тухнăранпа лăш! курманччĕ Шомикри Ямангеевсем. Кĕрхи ăмăр çанталăк Зинаида Леонидовнапа Виталий Геннадьевича сывлăш çавăрса яма май пачĕ.

4 çул каялла кил хуçи хресчен (фермер) хуçалăхне йĕркелесе яма шутласан, мăшăрĕ хирĕç пулмарĕ. Ик алла пĕр ĕç мар, çĕр ĕç пуласса ун чухнех ăнланчĕç. Ара ĕмĕрĕпех çĕр çинче ĕçлесе пурăнăскерсемшĕн çĕнни нимĕн те çук. Çитменнине колхоз та саланчĕ. Шухăшланă – тунă. Çынсен пай çĕрĕсене арендăна илчĕ Виталий Геннадьевич. Тулă акса хăварчĕ. Ăна пуçтарса кĕртсе Муркашри чăх-чĕп фабрикине сутрĕ. Ку çул ăна асăннă предприяти ертӳçи Н.Г. Ванеркин нумай пулăшрĕ: вăрлăх, удобрени туянма пулăшрĕ, тырă çапса турттарса кĕртме техника пачĕ. Пĕтĕм ĕçе вăхăтра туса ирттерчĕ фермер хуçалăхĕ. Парăма Виталий Геннадьевич фабрикăна тырă парса саплаштарчĕ.

Çĕнни çăмăллăнах пурнăçа кĕмест пулĕ çав.

– Вăт, сăх. Мĕн чуль çĕр илчĕ, – терĕç пĕрисем.

– Буржуй, – пăшăлтатрĕç теприсем куç хыçĕнче.

– Пуйса каять ĕнтĕ халь, – кĕвĕçрĕç виççĕмĕшĕсем.

Тупăш пирки калаçма-и унта пĕрремĕш çул. Тырă сутса тунă укçапа каллех удобрени, вăрлăх туянчĕ. Топливи те кирлĕ.

– Чей ĕçме те юлмарĕ пулĕ ун чух вăл укçа, – аса илет паян фермер çав ĕçе кӳлĕннĕ вăхăта.

Хресчен чунĕ пурри малтанах палăратчĕ çав Ямангеевра. Хуçалăхăнне складне туянса юлчĕ. Тырра халь çав складра упрать. Çĕр улми упрама пысăк хранилище ун хăйĕн малтанах пурччĕ. Пĕррехинче тата вăл, совхоз пур чухне, рабочисем сажалкăна касса тимĕр-тăмăра яма хатĕрленине асăрхарĕ. Шел, ĕçлекенскерех вĕт. Хăвăрт председатель патне кĕрсе кайрĕ.

– Металлолом хакне тӳле те, туянма пултаран, - терĕ ăна ун чух ертӳçĕ.

Çав сажалка фермер хуçалăхĕшĕн халь шăпах кирлĕ пулчĕ. Кăçал 2 гектар çинче çĕр улми те çитĕнтерсе илчĕ.

Пĕтĕмпе вара паян «Ямангеев» хресчен (фермер) хуçалăхĕнче арендăна илнĕ çĕр 50 гектар шутланать. Ытларах лаптăк çинче вăл урпа, тулă акса çитĕнтерсе илчĕ. Тухăç 18 центнерпа танлашрĕ. Юлашки çумăрсем ура хучĕç çав. Иккĕмĕш çăкăр кăшни гектартан вăтамран 110 центнер тухрĕ.

Ир вăранакан кайăк тутă пулнă евĕр, вăрлăха вăл иртнĕ çул çĕнĕ çул умĕнех учхозран килограмне 10 тенкĕпе туянчĕ. Вăл туяннă хыççăнах хаксем хăпарса кайрĕç, февральтех ăна 15 тенкĕпе туянчĕç ыттисем. Удобренине те Апатçимĕç фончĕ урлă çĕнĕ çул уявĕсем хыççăнах туянчĕ. Хыççăн туянакансемпе танлаштарсан, каллех йӳнĕрех пулчĕ.

Паян Виталий Геннадьевич снабженец кăна мар, хăех фермер хуçалăхĕн ертӳçи те, çумĕ те хăех, хăех инженер, агроном, механик, бригадир, тракторист, водитель... – пурĕ 23 профессипе ĕçлет Ямангеев фермер.

Маччаналла сурса выртсан, 50 гектар çинчен мар, 5 сотка çĕр çинчи пахча çимĕçе те пуçтарса кĕртейместĕн. Ямангеевсен вара ĕç кунĕ ирхи 4 сехетре пуçланать те мĕн тĕттĕмленичченĕ. Çулла тырă вырнă чухне çур çĕр иртни 2 сехеттен тырă тасатаççĕ складра. Кăçал килти хушма хуçалăха аталантармалли кредитпа 150 пин тенкĕ илсе аркăллă тырă склачĕ турĕ. Унта тырă тасатмалли агрегат вырнаçтарчĕ. Ялти пенсионерсем те каçхине касу кĕртнĕ хыççăн пушанаççĕ. Хаваспах пыраççĕ тырă аллама. Вĕсене фермер натурăпа тӳлет: 20 процент чухлĕ. Ялти çынна тырă-улăмĕ тем пекех кирлĕ-çке. Çĕр улми пуçтаракансене те çавăн пекех ăна процентпа парать. Вĕттине ахалех валеçет. Шкул ачисем 3 кун пычĕç те çĕр улми пуçтарма, 800 килограмм çĕр улмиллĕ пулчĕç.

Ытти ĕççене вара мăшăрĕпе иккĕшех тăваççĕ. Çуркунне Зинаида Леонидовна машина рулĕ умне ларатчĕ (пĕлтĕр ЗИЛ автомашина туянчĕç), Виталий Геннадьевич хăй сажалкăпа ĕçлетчĕ. Тракторĕ вĕсен малтанах пулнăччĕ. Çаплипех акса-лартса пĕтерчĕç ял хуçалăх культурисене.

Тыр-пула пухса кĕртнĕ вăхăтра фермер пĕр-ик бункер тырă çапать те, машина çине тырă тултарса, ăна склада кайса пушатать. Кашни кун çавăн пек. Виталий Геннадьевич кăçал 15 гектар çинче кĕрхи тулă акса хăварчĕ, 10 гектар çинче кĕрхи çĕртме сухи турĕ. Май килнĕ чух инженер профессине алла илнĕ ывăлĕ Геннадий килсе пулăшать. Канаш районĕнчи кĕрӳшĕ – Ирина хĕрĕн мăшăрĕ те ӳркенмест килсе пулăшма.

– Çанталăк кун пек çумăрсăр тăрсан, тата тепĕр 10 гектар сухаласа хăварассăн-ха, – тет фермер.

Çитес çул çĕр улмин лаптăкне те пысăклатасшăн: 3 гектара çитересшĕн. Тата «романовски» ăратлă сурăхсем ĕрчетме ĕмĕтленет.

–Ӳкĕнместĕр-и çак çула суйласа илнĕшĕн? – ыйтатăп В.Г. Ямангеевран.

–Çук. Ĕçлесе усси пур. Анчах та пĕрлех чир-чĕрĕ те çыпăçать, – хресчен ĕçĕ çăмăл маррине пытармасть фермер.

Ял хуçалăх продукцийĕ йӳнĕ пулни, çав хушăрах топливо хăпарса пыни пăшăрхантарать ăна. Унсăр пуçне килти 60 сотăй çĕр çинче те ĕçлеççĕ Ямангеевсем, ытти ял çыннисем пекех выльăх-чĕрлĕх усраççĕ. Вĕллесем те тытаççĕ.

–Тус-юлташсене хăналамалăх çитет пыл, – сăпайлăн калаçать фермер.

Куçĕсем вара ăшшăн йĕри-таврари уйсем çине тинкереççĕ. Амăшĕ ачи çине юратса пăхнă пек. Хресчен чунĕ пурăнать унра. Хăй суйланă пурнăç çулĕ ăна çунат хушать. Ĕшенни те манăçать кун пек чух.

Л. ТУКТИНА.

Çĕнни вăй илет

Малаллах аталанаççĕ Юнкăри кооперативсем

Умĕн калани

Ял çынни ĕçлеме ӳркенмест, мĕн тĕрлĕ кăна продукци туса илмест вăл. Туса илнĕ аш-пăша, пахча çимĕçе ăçта вырнаçтарассипе вара самаях пуçа çĕмĕрме лекет. Ку енĕпе потребительсен ял хуçалăх кооперативĕсем йĕркелени çăлăнăç выраннех ял çыннишĕн. Иртнĕ çул эпир хаçат страницинче Юнкă ял тăрăхĕнче вырнаçнă «Росагро» потребительсен ял хуçалăх кооперативĕпе кунти «Юнга–Согласие» кредит кооперативĕ ăнăçлă ĕçлени çинчен каласа панăччĕ. Кооперативсене йĕркеленĕренпе çаврăнăçусăрлăха пула пĕр-ик кооператив районта хупăнчĕ те пулмалла. Анчах та Юнкăсем пурнăçăн йывăр кустăрми айне пулмарĕç. Районти 16 ял хуçалăх кооперативĕнчен (8-шĕ аккредитации витĕр тухнă) чи пултаруллисем шутланаççĕ вĕсем паян та. Пĕтĕмпе 8 çын ĕçлекен икĕ кооператив ĕçĕпе паян Юнкă тăрăхĕнче пурăнакансем кăмăллă. Малтанхи пек Ермаков сĕт те пуçтарать, укçа та парать, теме пăрахрĕç халĕ ял çыннисем. Т.В. Ермакова ертсе пыракан кредит кооперативĕпе Н.В. Ядыков ертсе пыракан ял хуçалăх производство кооперативĕсене чăннипех те ку тăрăхра пурăнакансемшĕн усăллă пултăр тесе йĕркеленине ăнланмалăх вăхăт пулчĕ çав. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С.В. Ермаков хăй те кăмăллă вĕсен ĕçĕпе:

– Ĕçлеççĕ, тăрăшаççĕ, – тет вăл кооперативсем пирки.

– Пур кооперативсем те вĕсем пек ĕçлесен, мĕн тери çăмăл пулĕччĕ ял çыннине, – район администрацийĕн экономика паийĕн пуçлăхĕн Э. И. Симакован çак сăмахĕсем те Юнкăри кооперативсем малалла çирĕппĕн утнине çирĕплетеççĕ.

«Туй тумалла, кооператива каям-ха»

Кооперативсен кăтартăвĕсем хăйсем те çакăн çинченех каласаççĕ.Кредит кооперативнех илер-ха. Икĕ çул каялла йĕркеленнĕ «Юнга – Согласире» паян 116 çын тăрать. Чи малтанах çăмăлах пулмарĕ ăна йĕркеленме. Малтанах кăмăл пуррисене кооператив членне илчĕç. Унтан вĕсем пай укçи тӳлерĕç те, пайщиксем пулса тăчĕç. Пайщиксем хывнă укçатенкĕрен йĕркеленчĕ ĕнтĕ кооператив.

Паян вара вăл е ку ĕçе тума пысăкрах укçа кирлĕ пулсан, ăна кӳршĕ-аршă, тăвансем тăрăх шыраса хăшкăлмаççĕ. Кооперативпа килĕшӳ тăваççĕ те, укçа – кĕсьере. Хăть туй ту, хăть карта юса, хăть хапха ту. Килĕшӳре палăртнă вăхăтра укçана тавăрса паратăн та кооператива – ĕçĕ те пĕтнĕ. Çынран кивçен илнĕ пек никам умĕнче те парăмра юлмастăн.

Ку çеç те мар. Пуриншĕн те меллĕ çак кооператив пурри: кооператива укçа хываканĕшĕн те, укçа илсе усă кураканĕшĕн те. Ара кооператив халăхран укçана пысăк процентпа йышăнать. Вăл мĕн чухлĕ пуласси вара укçана мĕн чухлĕ тата мĕн вăхăта хунинчен килет.

Кооперативран укçа илекенĕшĕн тата мĕнле лайăх: палăртнă ĕçе тӳрех пуçлама пултарать. Кайран пĕчĕккĕн укçине тавăрса паратăнах. Кооперативсен тĕп бухгалтерĕ (икĕ кооперативăн пĕр тĕп бухгалтер, икĕ кооперативĕ те Юнкă клубĕнче вырнаçнă) А.М. Романова каланă тăрăх, илнĕ кредита тавăрса парасшăн мар пăркаланакансем ку таранччен пĕрре те пулман.

Кредит памалли чи кĕске вăхăчĕ вара – 10 кун, чи вăрăм вăхăчĕ – 1 çулталăк. Пайщиксем кооперативран укçа ытларах пĕр е икĕ уйăха илеççĕ.

Ентĕн те усă курма илекен укçа сумми 50 пин тенкĕрен иртсен, пурлăха саклата хывмалла. Çăмăл автомашинăна саклата хывса, 200 пин тенкĕ илнĕ тĕслĕх те пулчĕ. Килĕшӳре кăтартнă вăхăтра кредита тавăрса пачĕ ăна илекенĕ.

Кооперативăн пулăшăвĕпе пурте кăмăллă. А. В. Матвеев фермер та (вăл икĕ хутчен усă курчĕ), кооператив пулăшăвĕпе час-час усă куракан В. А. Селюшкина та, Л. Г. Самушкова та, ыттисем те.

Çакна та каласа хăвармалла. Кредит илекенсене кооператив страхлать. Çавăн пекех – выльăх-чĕрлĕхпе пурлăха та.

Пĕтĕмпе вара кăçалхи 9 уйăхра «Юнга–Согласие» октябрĕн 14-мĕшĕ тĕлне 80 килĕшӳ туса кредита пĕтĕмпе 1 млн. та 500 пин тенкĕлĕх панă çынсене. Иртнĕ çул 130 кредит килĕшĕвĕпе çынсене пурĕ 2 млн. та 600 пин тенкĕ панăччĕ, виçĕм çул – 20 килĕшӳпе 454 пин тенкĕ.

Кооператив тупăшĕ вара пысăках мар. Кăçал 150 пин тенкĕ пулчĕ. 120 пинĕ пайщиксене процент тӳлеме, ытти ĕçлекенсене ĕç укçи, пӳлĕме арендăна илнĕшĕн тӳлеме, оргтехника илме каять. Пĕлтĕр сĕтел-пукан, компьютер туяннă кооператив валли. Телефон кĕртрĕç.

Кăçал уйрăм çынсен 800 пин тенкипе усă курчĕ кооператив. Çитмен чухне республикăри «Согласие» кооперативран пулăшу илеççĕ. Юнкăри кредит кооперативĕ унăн иккĕмĕш сыпăкри кооперативĕ шутланать.

Кооператив хăйĕн тĕллевне ытларах тупăш илессинче мар, халăха ытларах усă парассинче курать. «Юнга-Согласие» виçĕ çулхи историйĕ вара шăпах кооперативăн задачипе ĕçĕ пĕр килнине çирĕплетсе парать.

Сĕт те пуçтарать, халăх ыйтнине те тивĕçтерет

«Росагро» ял хуçалăх производство кооперативĕ вырăнти халăхран сĕт пуçтарать. Унăн членĕсем 70-ĕн. Çапла майпа 3-мĕш çул ĕнтĕ Юнкăпа Кăпасра пурăнакан 80 çын кооператив уçалнăранпах сĕт параççĕ. Çулла кăçал кунне 1 тонна таран пуçтаратчĕ кооператив. Халь ĕнесем сĕт чакарнăран ку кăтарту 600 литрпа танлашать. Иртнĕ çулсенче кооператив пуçтарнă сĕте «Вита» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна паратчĕ. Паян вара сĕте кооператив 2 машинăна вырăнта пуçтарать те Муркашри сĕт-çу завочĕн представителĕсем хăйсемех килсе илсе каяççĕ. Завод кооператива кирлĕ чухлĕ сĕте пастерлесе те парать. Унпа кооператив Нискассинчи, Юнкăри, Мăн Сĕнтĕрти, Москакассинчи ача сачĕсемпе Атапайĕнчи ачасем вăхăтлăх пулмалли ушкăна, Калайкасси шкулне тивĕçтерет. Кĕçех кооператив хăех сĕте пастерлеме пуçлать, çакна валли оборудованине туяннă. Халĕ сертификат илессине тимлеççĕ ĕнтĕ. Çавăн пекех сĕте сивĕтме холодильник те илнĕ. Сĕт укçине кооператив çынсене 10 куншăн 5-6 кун хушшинче парса татать. Сĕт паракансене вĕсем ыйтнипе кооператив тăпăрчă, çу парать. Сĕт-çу завочĕне килĕшсе татăлать те кун пирки. Унсăр пуçне кооператив выльăхсем валли ыраш çăнăхĕ, шурă çăнăх, тырă хывăхĕ илсе килсе парать элеватортан. Кăçал çулла ав çынсене вĕсем ыйтнипе помидор та илсе килсе пачĕç. Ялти халăхăн çулла хула тăрăх ярăнса çӳреме вăхăт çукрах çав.

Пĕр литр сĕте кооператив паян 7 тенкĕпе пуçтарать. Сĕт чĕрĕ укçа çăл куçĕ пулнине ку тăрăхра пурăнакансене ăнлантармалла мар ĕнтĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. В. Ермаков хуçалăхĕ, Явăльняри Н. В. Шандимирова Г. М. Маряшкина тата ыттисем уйрăмах сĕт нумай параççĕ кооператива.

Пĕчĕккĕн малаллах утать «Росагро». Халăхшăнах тăрăшать.

Л. ПАВЛОВА.

Ыран – Автомобиль транспортĕнче ĕçлекенсен кунĕ

АВТОМОБИЛЬ ТРАНСПОРЧĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире хăвăрăн професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Предприятисемпе организацисен ĕçĕ-хĕлĕ сирĕн кулленхи тăрăшуллă ĕçĕрпе тачă çыхăннă. Кирек хăш отрасльте ĕçлесен те, хăвăрăн тивĕçĕре кирлĕ пек пурнăçлатăр. Чылай чухне кăткăс условисенче вăй хуратăр. Районăн социаллă-экономика аталанăвĕшĕн ырми-канми тăрăшатăр. Тавах сире çăмăл мар пархатарлă ĕçĕршĕн.

Водительшĕн чи пахи вăл - çул тикĕс те йĕркеллĕ пулни. Юлашки 2 çул хушшинче ку енĕпе пысăк ĕçсем туса ирттертĕмĕр. Кăçал 26 ял патне çул туса пĕтерме палăртнă. Республика çулĕсене юсассипе те нихçанхинчен ăнăçлăрах ĕçлерĕмĕр. Çакă вара çул çинчи хăрушлăха чакарма май парать, автотранспортпа усă курассин шанчăклăхне палăрмаллах ӳстерет.

Эсир малашне те хăвăрăн тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласса, тимлĕх пирки пĕр самантлăха та манмасса шанас килет. Хăвăрăн йăнăшма юраманнине, ĕçĕр вуншар, çĕршер çын пурнăçĕпе çыхăннине малалла та асрах тытăр. Пурнăçра çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшӳ сунатăп. Çулăр сирĕн яланах уçă, кун-çулăр вăрăм та телейлĕ пултăр. Инкек-синкек мĕнне ан пĕлĕр, килте çывăх çынсем сире яланах кĕтсе илччĕр.

Район пуçлăхĕ Ю.А.ИВАНОВ.

Ĕç ĕмĕрĕ – руль умĕнче

Мĕн-ши вăл шăпа? Телей тата мĕн? «Телей мĕнле пулать-ши, кам каласа парать-ши?»– тесе юрлаççĕ юрăçсем. Шăпа, телей, ăраскал – çыннăн хăйĕн аллинче. Шăпа пурнăçра кашни çыннах таçта та илсе çитерет.

Иван Алексеевич Ершовăн вара çуралнă вырăнтах – тăван Чамăш ялĕнчех кун кунлама тивнĕ. Нумай çын ĕçре телей туптать. Кирек епле ĕçе те чуна парса, юратса тумалла. Чун турттман ĕçре малашлăх çук. Техникăна юратмасăр тата тарăн пĕлӳсĕр 39 çул ытла водительте ĕçлеме пулĕ-и? Çук.

Водитель стажĕ Иван Алексеевич Ершовăн 1969 çулта салтак службинче пулнă вăхăтра пуçланнă. Унтан таврăнсан икĕ çул хушши районти «Сельхозтехника» пĕрлешӳре бензин турттармалли автомашина водителĕнче тăрăшнă. 1972 çултанпа ĕнтĕ сивви-ăшшине, йĕпи-сапине пăхмасăр «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕнче вăй хурать. Сивĕ-и, ăшă-и, çумăр çăвать е çил-тăман алхасать – водитель яланах çул çинче. Вĕсем нумай чухне кăткăс условисенче ĕçлеççĕ, хăйсен тивĕçне пурнăçлама яланах çула тухаççĕ.

Çулталăк тăршшĕпех ĕç пĕтмест Иван Алексеевичăн. Çур акинче ГАЗ-53 автомашинăпа хире тырă илсе тухса парать, çу кунĕсенче утă-улăм рулонĕсене турттарать, сенаж хатĕрлеме хутшăнать, вырма вăхăтĕнче комбайнсем патĕнчен йĕтем çине тырă кĕртет. Шкул ачисем кăларнă çĕр улмине хранилищĕне турттарать. Хĕллехи вăхăтра çунтармалли-сĕрмелли материалсем кӳрсе килессипе тимлет. Фермăсенчи выльăхсем валли комбикорм турттарса парассине те ăна шаннă. Тăтăшах инçе çула та тухса çӳрет вăл.

Çавна та каласа хăвармалла. Çулленех комбайнсем патĕнчен тырă турттарассипе вăл хуçалăхра та, районта та малти вырăнсене çĕнсе илет. Автомашинăна яланах юсавлă, тирпейлĕ тытать.

Ĕçри хастарлăхĕшĕн, пултарулăхĕшĕн ăна пĕрле ĕçлекен юлташĕсем хисеплеççĕ. Нумай çул хушши вăл «Хуçалăхри чи лайăх водитель» чыслă ята тивĕçнĕ. Унăн Хисеп грамотисем те сахал мар. Ăна хаклă парнесем парса та чыс тунă.

Акă кăçал та тулли мар тăхăр уйăх хушшинче вăл 65 пин тонна-километр чухлĕ ĕç пурнăçланă. Кăçал та «Хуçалăхри чи лайăх водитель» ята тивĕçнĕ.

Пултаруллă çын кирек ăçта та хисепре. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл ял çыннисем умĕнче те, коллективра та пысăк хисепре, çемьере те юратнă ашшĕ. Мăшăрĕпе Лидия Петровнапа ывăлпа икĕ хĕр тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерсе, вĕрентсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Виçĕ мăнук ӳсет.

Иван Алексеевич хăйĕн пурнăç шăпипе кăмăллă. Нумай çул водитель пулса ĕçленĕшĕн савăнать кăна, хăйне телейлĕ тесе шутлать. «Çур ĕмĕртен пурăнса иртрĕм, çуран утса курмарăм»,– тесе шӳтлет.

КӲРШИСЕМ.

Ĕç итогĕсене пĕтĕмлетсе

Тăрăшса ĕçлесен ӳсĕм пулатех

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Паянхи уява ял хуçалăх предприятийĕсенчи выльăх-чĕрлĕх пăхакансем те ялăх мар кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ. Усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне кăçалхи тăхăр уйăхра 37 центнер аш-какай, 185 центнер сĕт туса илнĕ. Кашни ĕнерен вăтамран 2939-шар килограмм сĕт сунă. Районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансем республика шайĕнче те пултарулăхпа палăрса тăраççĕ. Сăмахран, «Герой» хуçалăхри кашни ĕне çулталăк пуçланнăранпа вăтамран 4038-шар килограмм сĕт панă. «Ударник» сăнавлă хуçалăхри Зоя Степановна Андреева хăйне çирĕплетсе панă ушкăнри ĕнесенчен 4818-шар килограм сĕт сунă, «Герой» хуçалăхри Надежда Михайловна Борисова кашни ĕнерен 4423-шер килограмм суса пĕлтĕрхи шайран самаях ирттернĕ.

Мăйракаллă шултра выльăх самăртас тĕлĕшпе «Оринино» хуçалăхри Нина Анисимовна Захаровапа Рита Евгеньевна Горшкова хастар тăрăшаççĕ. Вĕсем пăхакан выльăхсем çулталăк пуçланнăранпа талăксерен 1094-шар грамм, «Свобода» хуçалăхри Луиза Ивановна Кольцовапа Владислав Арефьевич Дедов пăхакан ушкăнри вăкăрсем 836-шар грамм ӳт хушрĕç.

«Герой» хуçалăхри сысна самăртас ĕçре вăй хуракан Ираида Юрьевна Пискаревапа Элизавета Михайловна Трофимована тата ыттисене те тав тăвас килет.

«Моргаушская» чăх-чĕп фабрики çулталăк пуçланнăранпа çăмарта илессине 10 процент ӳстернĕ. Тавтапуç сире пархатарлă ĕçшĕн.

Хурт-хăмăр ĕрчетессипе кăçал та Мичурин ячĕпе хисепленекен, Ленин яч. хис, Ильич яч. хис, «Герой» хуçалăхсенчи хурт-хăмăр ăстисем лайăх кăтартусемпе палăрса тăраççĕ, хăйсен тĕллевĕсене ăнăçлă пурнăçласса пыраççĕ.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçармалли тапхăр пуçланчĕ. Хальхи вăхăтра «чĕрĕ укçа» выльăх-чĕрлĕх продукцине ытларах хатĕрлесе сутнипе кăна пулнине кашни хуçалăх ертӳçи, специалистсем те ăнланма тивĕç, çакăншăн тăрăшмалла та. Çавăнпа та выльăхсен йышне чакармасăр упраса хăварасси, продукци илессине ӳстересси кашни хуçалăхрах тĕп тĕллев пулмалла.

Хисеплĕ ял ĕçченĕсем! Сире пурне те пархатарлă ĕçшĕн, ырми-канми вăй хунăшăн тата тăрăшнăшăн чун-чĕререн тав тăватăп, малашне те ӳсемлĕ ĕçлеме сывлăх, ăнăçу сунатăп.

В. АНАНЬЕВ,
район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.